Материал представлен из коллекции электронной библиотеки «Писатели Чувашии – детям» – **pchd21.ru**
Электронная библиотека создана Чувашской республиканской детско–юношеской библиотекой **– www.rdub21.ru** – на средства гранта Президента Российской Федерации для поддержки творческих проектов общенационального значения в области культуры и искусства

## Автор: Карягина Марина Федоровна

## Книга: Кăтра хĕвел çаврăнăш

## Рассказ: Кăтра хĕвел çаврăнăш

Ĕнтĕркесе выртатчĕ Кӳлленчĕк ĕшне хĕрринче – курах кайрĕ: такам шăтарасла пăхать ун çине. Çăлтăр иккен. Çуталчĕ Кӳлленчĕкĕн сăнĕ. Çак аслă тĕнчере ăна, пĕчĕк кӳлле, асăрханă Çăлтăр та пур! Калама çук инçетре пулин те шыраса тупайнă-çке-ха вăл ăна!

Вĕсем сăмахсăрах пĕр-пĕрне ăнланчĕç. Кӳлленчĕк хальччен пĕлмен те куçран куçа пăхсан сассăр та калаçма пулнине.

– Шăнтăн-им, пĕчĕкскерĕм? – ачашшăн ыйтрĕ унран Çăлтăр.

– С-си-вĕ... – терĕ те, Кӳлленчĕк пĕвĕ тăрăх вĕтĕ хумсем чĕтренсе чупса кайрĕç. – С–са–на куртăм та ăшăннă пек пултăм...

– Сулхăнрах çав каçсерен. Иртерех вăраннă эсĕ хĕллехи ыйхăран.

– Хĕвел вăратса хăварчĕ те... Хăй яланах çĕр каçма таçта инçете çӳрет...

– Хам ăшăтам-и сана?

– Хĕвел пулма пĕлместĕн пуль эс...

– Сана çăлтăр пек ăшăтап. Малтан канлĕн çывратса ярăп, унтан чĕнтĕр пек чечен пăрпа витĕп, кайран куç илми ыйхуна сыхласа тăрăп.

– Мĕнле тав тума пĕлем-ши сана, Săлтăрăм?

– Эсĕ кашни каç ман çинчен аса ил – çакă тав туни пулĕ.

Кӳлленчĕк лăпкăн çывăрса кайрĕ. Ăшă тĕлĕк тĕлленчĕ ăна. Вăл хăйне мамăк утиял айĕнче телейлĕн măш-măш сывласа выртнă евĕр туйрĕ...

Ирхине вăранса кайрĕ те тӳрех Çăлтăр çинчен аса илчĕ.

Çуккă вăл! Тен, пăр утиял витĕр çеç курăнмасть? Ыйхăллă куçне сăтăркаларĕ те тĕмсĕлерех пăхрĕ. Çук. Пăрахса кайнă... Пулма пултараймасть! Кӳлленчĕк ăшă тутипе ăф-ăф! тесе чĕлтĕркке пăра ирĕлтерме хăтланчĕ. Çакна Хĕвел асăрхарĕ те:

– Вăрантăн-им? – терĕ ĕнерхи саспах.

Кӳлленчĕк чĕнмерĕ. «Мĕн калайăн ĕнтĕ çакăн пек пĕлĕшсене? – шутларĕ вăл тертленсе. – Тус пулма пĕлмеççĕ вĕсем. Пĕри кăнтăрла ăшăтать те каçпа пăрахса хăварать, тепри çĕрле ырă кăмăллă курăнать те кăнтăрла тăнч çухалать...»

– Илтрĕм сан шухăшна, – терĕ Хĕвел. – Каçсерен каймах тивет çав, мана пур çĕрте те кĕтеççĕ. Эпĕ ăçта çитетĕп, çавăнта çĕнĕ кун пуçланать.

– Ăнлантарса хăвармарăн та, шантăм сана... Шантăм...

– Чăтма та хăнăхас пулать. Тӳсĕмлисем кăна телей тутине пĕлеççĕ, – терĕ те Хĕвел урăххисем çине пăхма кайре.

Сасартăк юнашарах темле вĕтĕ чĕр чун пăнкăльт! сиксе тухнине курах кайрє Кӳлленчĕк. Хе, пĕтĕм кӳлепипе мар, симĕс сăмсине кăна кăларчĕ-ха – асăрханать апăрша. Тамаша, сăмсапа та пăхма пулать иккен! Кăсăклансах кайрĕ Кӳлленчĕк. Усет тата хайхи! Чĕр чун мар иккен ку – темле курăк.

– Курăк, эсĕ мĕншĕн шăтса тухрăн кунта? – персе ячĕ Кӳлленчĕк тĕлĕнсе хытса кайнипе.

– Сана пĕччен кичем пуль терĕм, ешĕл куллипе чуна çемçетсех ячĕ лешĕ.

– Вăхăтсăр килтĕн эс, – мăкăртатрĕ Кӳлленчĕк. – Манăн никампа та туслă пулассăм килмест.

– Вăхăтсăртарах килнине хам та сисрĕм-ха. Иртерех шăтса тухрăм. Халь тӳсес пулать ĕнтĕ. Тӳсĕмлисем анчах телей тутти-масине пĕлеççĕ... «Хĕвел шухăшне те пĕлет тата хăй», – кăмăлсăррăн шухăшларĕ Кӳлленчĕк.

– Пĕр-пĕрне тӳссе пурăнас пур мĕншĕн юнашар шăтса ӳсес? – мăкăртатрĕ саспа.

– Такама кӳреннĕ пулас эсĕ, Кӳлленчĕк? – сисчĕвленчĕ Курăк. – Чим-ха, мĕншĕн санăн никампа та туслă пулас килмест вара?

– Туссем шанчăксăр-çке, вĕсем улталама пултараççĕ... Малтан çепĕç сăмахпа ăшатаççĕ те кайран çăмăллăнах сивĕлĕхе пăрахса хăвараççĕ...

– Эпĕ сана пăрахса хăвармăп. Ĕмĕрĕм тăршшĕпе юнашар сана ачаш сăмахсемпе вăй парса тăрăп.

– Çакăн пек пĕчĕкскер-и? – ун çине ĕненмесĕр пăхса илчĕ Кӳлленчĕк. Урăх калаçасшăн та пулмарĕ.

Çуркунне хăюлансах пычĕ. Хĕвел те кунсерен хĕрӳрех пăхма пуçларĕ. Пĕррехинче ăнсăртран тенĕ пек кăна кӳрши çине пăхса илчĕ ,те Кӳлленчĕк хăйĕн куçне хăй ĕненмерĕ.

– Эсех-и ку? Мĕнле ӳссе чиперленсе кайнă! Паллама та çук сана: туну, çулçусем...

– Тавах ырă сăмахушăн, – йăл çиçрĕ Курак. – Тӳпенелле пăхатăп та ӳсетĕп кунсерен çапла. Сивĕ чухнех шăтса тухни усса пычĕ пулинех мана – чăтăмлăхăм пур...

Телей тутине пĕлесех килет-çке! Эпир çавăншăн çуралнă мар-и...

– Мĕнлерех ăнланмалла-ши ăна, телей тенине?

– Телей вăл... Телей вăл ыттисене савăнăç, хаваслăх кӳрейни-тĕр.

– Ыттисем хĕпĕртенĕ чухне эсĕ кичеммĕн тăни-и телей?..

– Çук. Эсĕ те савăнатăн. Ыттисене савăнтарайнăшăн чун-чĕрене килекен пысăк савăнăç вăл – телей. Вĕсен сăнĕ яр çуталса каять те, вара санăн та кулас, ӳсес, ешерес килет! Пурăнас килет! Пирĕн, чĕррисен, пĕтĕм ĕç çакă-çке – пурăнасси. Тавралăха илем кӳрсе пурăнасси.

– Апла телейлĕ пулма тăрăшмалла!

– Тĕрĕс. Телей тăрăшмасăр килмест.

– Апла... Апла эсĕ маншăн Хĕвелĕм пулан...

Пурăнчĕç вĕсем çапла шăкăл–шăкăл калаçса. Йăлтах пĕрле тӳсрĕç: çил–тăвăлне те, аçа–çиçĕмне те, шалкăм çумăрне те...

Пĕррехинче – уяр кун та мар, ăмăр кăна çанталăкра – тĕлĕнтермĕш пулса иртрĕ: Курăк çеçке çурчĕ! Чат Хĕвел сăнлă çеçке! Хĕвелĕм те Хĕвелĕм тесе чĕннĕрен пулчĕ-шим çапла? Пăх-ха, сап-сарă, пĕчĕк кăна кăтра хĕвел! Симĕс туя çинче çулçă сарса ӳссе ларнăскер. Аптăрасах ӳкрĕ Кӳлленчĕк.

– Хĕвел! Эсĕ мана хĕрхеннипе çума килсе шăтса усрĕн-им? Мана шеллеме кирлĕ марччĕ. Халь кам çӳрет ĕнтĕ урăххисем патне çĕнĕ кун пуçлама – çакăн çинчен шухăшланă-и эс? – Ан кулян. Эпĕ Хĕвел мар. Тĕрĕс ятăм – Хĕвел çаврăнăш. Сана телей кӳме шăтса ӳсрĕм те – хĕвел сăнлă çеçке çуртăм ак... Кӳлленчĕкĕн пырне йӳçĕ чăмакка килсе капланчĕ. Темле йывăрлăхра та куççуль кăларманскер текех тӳсеймерĕ, йĕрсе ячĕ. – Эсĕ... – чăн-чăн тус!.. Эсĕ мана самантлăха та пăрахса хăвармарăн. Ман савăнăçăмпа савăнтăн, эпĕ мĕн чăтнине пєрле тӳсрĕн, – хăпартланса калаçрĕ те калаçрĕ Кӳлленчĕк. – Эсĕ вара ман тымарсене сĕтек парса тăтăн. Йывăр чухне типсе хăрма памарăн. Сăмахусем маншăн сипетлĕ пулчĕç. Пурнăçран мĕн кĕтрĕн – çавна кĕтсе илтĕн те, телейĕм... – Телейĕм?.. Ытарайми Хĕвелĕм! Кăтра Хĕвел çаврăнăшăм! Эпĕ ăнлантăм: телей вăл – юнашар чăн-чăн тус пурри! Çумри тусу саншăн хĕвел пулса тăни!

Все тексты взяты из открытых источников и выложены на сайте для не коммерческого использования.
Все права на тексты принадлежат только их правообладателям.